*Асран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

36 (2623) №
Хакĕ ирĕклĕ

# Хресчен сасси

2016
авăн
15

1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

КĔÇНЕРНИКУН

ФОРУМ

# Шкулсăр ял – малашлăхсăр



Сăнÿкерчĕксене www.cap.ru сайтран илнĕ

**Виçĕм кун Шупашкара Раççей Федерацийĕн 62 регионĕнчен 505 делегат çĕршыври ял учителĕсен съездне килсе çитрĕç. Виççĕмĕш хут иртнĕскерĕн пленарлă пухăвне РФ вĕренÿ тата ăслăлăх министрĕ Ольга Васильева, Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, РФ Президенчĕн Атăлçи федераци округĕнчи полномочиллĕ представителĕн пулăшуçи Олег Машковцев, РФ Патшалăх Думин Вĕренÿ комитечĕн председателĕ Вячеслав Никонов, Раççей Патшалăх Думин Вĕренÿ комитечĕн председателĕн заместителĕ Алена Аршинова, ЧР вĕренÿ министрĕ Юрий Исаев тата ыттисем те хутшăнчĕç.**

Пухăннисем ялти шкул учителĕн Раççей аталанăвĕн тапхăрĕнче мĕнле пулмаллине, ĕçлемеллине сÿтсе яврĕç. Съезд вăхăтĕнче пленарлă пухусăр пуçне тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ темăсемпе 5 лапам ĕçлерĕ.

Чăваш Республикинчи лару-тăрупа, кунти пĕтĕмĕшле вĕренÿ тытăмĕпе регион Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев паллаштарчĕ.

Чăваш Енри халăхăн 39 процентĕ ялта пурăнать. Çавăнпа кунта ача сачĕсем тăвас тата тĕпрен юсас программа тĕллевлĕ пурнăçланать. Муниципалитетсен 70 процентĕнче икĕ çултан аслăрах ачасем валли вырăнсем йĕркеленĕ. Çулталăк çурă тултарнисем валли учрежденисем тăвас ĕç те малалла пырать. Юлашки çулсенче ялсенче 9 çĕнĕ шкул уçăлнă, 100 спортзала тĕпрен юсанă.

Профориентаци енĕпе республикăра кăçал çамрăксен инноваци пултарулăхĕн тăваттăмĕш центрĕ (ăна технологи хатĕрĕпе пуянлатнă) уçăлать. Раççей Вĕренÿ министерствин конкурсĕнче çĕнтерни ачасен технопаркне йĕркелеме май парать. Çулсерен пиншер пуçаруллă хĕрпе каччă ЧР Пуçлăхĕн стипендине тивĕçет.

Раççей шайĕнчи олимпиадăра çĕнтернĕ шкул ачине е специальноçпа вăтам професси пĕлĕвĕ илекен çамрăка тĕрлĕ конкурса, олимпиадăна хатĕрлекен педагогсене кăçалтан пуçласа укçан премипе хавхалантарма йышăннă.

Раççей Вĕренÿ министерствине ертсе пыракан Ольга Васильева палăртнă тăрăх – ялти шкул ачисене воспитани парассипе тата вĕрентессипе кăна ĕçлемест, вăл вырăнти территорие тытса тăрать. Урăхла каласан, шкул пулсан ял пурăнать.

Министр пĕрлехи патшалăх экзаменне çĕнетес тĕллĕпе малалла ĕçлемеллине те асăнчĕ. Унăн шухăшĕпе тест шутне чакармалла, пултарулăхпа çыхăннине ÿстермелле.

Учитель шалăвĕ юлашки вăхăтра нумай каластарнăран ку енĕпе те çирĕп йĕрке тăвасса шантарчĕ. "Хальхи вăхăтра хатĕрлекен норматив никĕсĕпе килĕшÿллĕн ĕç укçин 70 % – тĕп пайран, 30 % хавхалантару тÿлевĕнчен тăрĕ. Çакă мĕнпур вĕренÿ учреждениине пырса тивет", – ăнлантарчĕ Ольга Васильева.

Вĕрентекенсене тахçантанпах канăç паман ытти ыйту та айккинче юлмарĕ. Акă



О. Васильева министр.

пуçламăш классем валли вĕренĕвĕн пĕрлехи никĕс стандартне вăраха ямасăр хатĕрлемелле. Пуçламăш шкулшăн вăл пуриншĕн те пĕр пек пулмалла. Вĕренÿ программисенчен тĕп никĕс шутне чи лайăххисене суйласа илмелле. Унсăр пуçне тĕплĕ вĕрентмеллисем те кĕртмелле. Чи пĕлтерĕшли – стандарта пахалăхпа пуянлатасси. Анчах пуçламăш классене çав тери нумай кĕнеке сĕнни пулмалла мар.

Министр электрон вĕренÿ ресурсне аталантармаллине те аса илтерчĕ. "Эпĕ çакăн çинчен сахал мар каланă, мĕншĕн тесен унпа мĕн кирлине тупма çăмăл. "Раççей электрон шкулĕ" портал пулăшнипе (ăна Раççей Президенчĕ хушнипе хатĕрленĕ) учительсем хăйсем те пĕлтерĕшлине нумай тупĕç: методика хатĕрне те, видеоматериал та. Çулталăк вĕçленичченпортал тĕппипех ĕçлесе кайĕ. Ялти учительсем унпа хастар усă курасса шанатăп", – терĕ вăл.

Ольга Васильева асăннă тăрăх – сахал ачаллă шкулсене регионсенче упраса хăварассишĕн çине тăмалла.

Педагога паракан пурнăçри çăмăллăхсем те упранса юлăççĕ. Унсăр пуçне ялти учительсене пулăшма йĕркеленĕ ятарлă программăсем те яланхиллех ĕçлĕç. Сăмахран, "коммуналлă хуçалăх тăкакне саплаштарассине" çĕршыври пур регионăн та пурнăçламалла. Ку халĕ федераци шайĕнчи норма шутланать. Унсăр пуçне чылай çĕрте çав çăмăллăхпа пенсие тухнă педагогсем те усă курăççĕ, 51 регионта – çемье членĕсем те.

Вĕрентекенсен ăсталăх шайĕ те ÿсет. Тĕслĕхрен, 2011-2015 çулсенче Пĕтĕм Раççейри "Çулталăк вĕрентекенĕ" конкурсăн юлашки тапхăрĕсене 82 ял учителĕ хутшăннă, çакă – пĕтĕмĕшле йышăн 20 %. 2011 тата 2013 çулсенчи çĕнтерÿçĕсенчен ытларахăшĕ – ялти шкулсенчен.

Ялсенче çĕнĕ вĕренÿ учрежденийĕсем тăвас, инфратытăма аталантарас тĕллеве патшалăх малти вырăна лартать. Çак çул вĕçлениччен çĕршыври ялсенче тепĕр 12 шкул (6890 вырăнлăх) хута каймалла.

Форума хутшăннисем те хăйсен регионĕсенчи ĕç опычĕпе паллаштарчĕç.

Чăваш Енрен те ыттисен сахал мар вĕренмеллине палăртрĕ министр республика Пуçлăхĕпе Михаил Игнатьевпа уйрăммăн тĕл пулнă май. Хăйне уйрăмах Янăшри пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан шкул тĕлĕнтернине пытармарĕ вăл.

Унта вăл съезд иртнĕ кунах Михаил Игнатьевпа çитсе курчĕ. Хăнасем шкулчченхи ачасен ушкăнĕпе, информаципе библиотека центрĕпе, пултарулăх студийĕсен ĕçĕпе паллашрĕç, вĕренÿ пÿлĕмĕсене, пуху иртмелли, спорт залĕсене, бассейна пăхса çаврăнчĕç.

Ольга Васильева шкул ĕçченĕсемпе тĕл пулса калаçрĕ, вĕсене пăшăрхантаракан ыйтусемпе кăсăкланчĕ, малашнехи сĕнĕвĕсене пĕлесшĕн пулчĕ. Педагогсем пĕрешкел вĕренÿ программисемпе ĕçлесшĕн пулнине пытармарĕç, шалупа çыхăннă тата ытти ыйтăва та хускатрĕç.

"Янăш шкулĕсĕр пуçне Чăваш Енре мана вĕренÿ наци йăли-йĕрки çине тĕревленни кăмăла кайрĕ. Кунта халăх пултарулăхĕ, наци литератури хисепре. Çакă пĕлтерĕшлĕ, мĕншĕн тесен йăла-йĕрке тĕп никĕс пулсан ыттине ун çинче йĕркелеме пулать", – палăртрĕ министр.

**Ирина НИКИТИНА.**

*ÇЫРĂНТАРУ – 2017*

## «Хыпара» – кашни çемьене

**Авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнчен – 30 % йÿнĕрех**

**2017 çулăн I çурринче илсе тăмашкăн *авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнчен* йÿнĕ хакпа: «ХЫПАРА» – 572,88 тенкĕпе, «ХЫПАР-эрнекуна» – 279,36 тенкĕпе, «ХРЕСЧЕН САССИНЕ» 250,08 тенкĕпе кашни çыхăну уйрăмĕнчех çырăнтараççĕ**

## Республика уй-хирĕнче

Çак эрне пуçламăшĕ тĕлне республикăра пĕтĕмпе 637,3 пин тонна тырă (пĕлтĕр çак вăхăтра 524,3 пин тонна) пуçтарнă, кашни гектартан вăтамран – 22,5 ц (иртнĕ çулхи кăтарту – 20,5 ц).

Пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсене 13 районта вырса пĕтернĕ. Асăннă вăхăт тĕлне вĕсене вырма лаптăкĕн 99,5 процентĕ çинче е 282,9 пин гектар çулнă. Çанталăк чăрмантармасан çывăх вăхăтра ĕççипе татăлмалла.

Тĕштырă тухăçлăхĕпе Елчĕк (кашни гектартан вăтамран 28 ц) тата Вăрнар (27,7 ц) районĕсем палăрнă.

Çĕрулмине 3 пин гектар çинчен кăларнă. Пĕр гектартан вăтамран 187,7 ц тухнине шута илсен хальлĕхе пĕтĕмпе 57,1 пин тонна пуçтарса илнĕ.

Пахчаçимĕç тухăçĕ гектар пуçне 185,9 центнерпа танлашнă, 296 гектар çинчен 5,5 пин тонна пуçтарнă. Çурхипе танлаштарсан кĕр тырри самай тухăçлине палăртаççĕ специалистсем. Эрне пуçламăшĕ тĕлне ăна пĕтĕмпе 87 пин гектар акнă. Элĕк (100,3 %), Йĕпреç (100,1), Хĕрлĕ Чутай (100), Муркаш (101,8), Пăрачкав (100), Çĕмĕрле (128,2) тата Елчĕк (100) районĕсенче ку тĕлĕшпе палăртнине пурнăçланă.

☑ СОРОКИН
☑ ГОЛИЦЫН
МЕНЬШЕ БАНКОВ – БОЛЬШЕ ЗАВОДОВ
Гражданская ПЛАТФОРМА +Я
Пичет лаптăкне Федерацин "РФ Федераци Пухăвĕн Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавĕ çинчен" саккунĕн 66-мĕш ст. килĕшÿллĕн "Гражданская Платформа" политика партине тÿлевсĕр панă

18 СЕНТЯБРЯ ВЫБОРЫ ДЕПУТАТОВ ГОСДУМЫ РФ
☑ ЛДПР
Площадь предоставлена на безвозмездной основе зарегистрированному кандидату в депутаты Государственной Думы по Чебоксарскому одномандатному избирательному округу №38 С.А. Белобаеву



Площадь предоставлена на безвозмездной основе зарегистрированному кандидату в депутаты Государственной Думы по Чебоксарскому одномандатному избирательному округу №38 Н.Б. Рылеевой



Площадь предоставлена на безвозмездной основе зарегистрированному кандидату в депутаты Государственной Думы по Канашскому одномандатному избирательному округу №37 А.П. Капитонову

Яблоко
Власть должна быть сменяема и контролируема народом.
ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕ çинчен" саккунăн 48-мĕш ст. килĕшÿллĕн "ЯБЛОКО" политика партине пичет калăпăшне тÿлевсĕр панă

ЯБЛОКО
Тăван Чăваш Ен ырлăхĕшĕн ĕçлени - халăх ырлăхĕшĕн тăрăшни
☑ Николай Яранский
Пĕрле – ăнăçатех!
Площадь предоставлена на безвозмездной основе зарегистрированному кандидату в депутаты Государственного Совета Чувашской Республики по Цивильскому одномандатному округу № 7 Н.В. Яранскому

ГОЛОСУЙТЕ ЗА ПАРТИЮ ПЕНСИОНЕРОВ!
ЗА ДЕТЕЙ! ЗА ВНУКОВ! ЗА СЕБЯ!
Пичет лаптăкне Федерацин "РФ Федераци Пухăвĕн Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавĕ çинчен" саккунĕн 66-мĕш ст. килĕшÿллĕн "Российская партия пенсионеров за справедливость" политика партине тÿлевсĕр панă

Яблоко
Власть должна быть сменяема и контролируема народом.
Площадь предоставлена на безвозмездной основе зарегистрированному кандидату в депутаты Государственной Думы по Чебоксарскому одномандатному избирательному округу №38 В.И. Аркадьеву

КПРФ
ВЫБОРЫ В ГОСДУМУ РОССИИ
НАШ ЛИДЕР - ЗЮГАНОВ
за №12 в избирательном бюллетене
Пичет лаптăкне Федерацин "РФ Федераци Пухăвĕн Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавĕ çинчен" саккунĕн 66-мĕш ст. килĕшÿллĕн "КПРФ" политика партине тÿлевсĕр панă



Площадь предоставлена на безвозмездной основе зарегистрированному кандидату в депутаты Государственной Думы по Канашскому одномандатному избирательному округу №37 Д.А. Семенову

18 СЕНТЯБРЯ
СР СПРАВЕДЛИВАЯ РОССИЯ
ВЫБОРЫ НОВЫХ ДЕПУТАТОВ!
☑ ВЫБИРАЕМ СПРАВЕДЛИВОСТЬ!
Пичет лаптăкне Федерацин "РФ Федераци Пухăвĕн Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавĕ çинчен" саккунĕн 66-мĕш ст. килĕшÿллĕн "СПРАВЕДЛИВАЯ РОССИЯ" политика партине тÿлевсĕр панă


СЪЕЗД

# Туслăха тусан ан пустăр

Авăн уйăхĕн 10-мĕшĕнче Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче Чăваш Республикинче пурăнакан халăхсен съезчĕ иртрĕ. Унта Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, Раççей Халăхĕсен ассамблейин Канашĕн председателĕ Светлана Смирнова, ЧР Пуçлăхĕ çумĕнчи Ваттисен канашĕн председателĕ Лев Кураков, ЧР культура, национальноçсен ĕçĕсен тата архив ĕçĕн министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Константин Яковлев, Шупашкар тата Чăваш епархийĕн управляющийĕ Варнава митрополит, РФ Общество палатин членĕ, Мускав, Тĕп регион тата Чăваш Ен муфтийĕ Альбир Крганов, РФ Общество палатин членĕ, Пĕтĕм тĕнчери «Чĕрĕ планета» экологи юхăмĕн председателĕ Николай Дроздов хутшăнчĕç.

Съезда пухăннисем чи малтан Пĕтĕм тĕнчери Кокель пленэрне хутшăннă ÿнерçĕсен куравĕпе паллашрĕç. Чăваш, вырăс, пушкăрт, тутар, белорус художникĕсен ĕçĕсене хакларĕç.

Халăхсен Аслă Пухăвне ЧР Пуçлăхĕ çумĕнчи Ваттисен канашĕн председателĕ Лев Кураков уçрĕ. Съезд регион Пуçлăхĕн йышăнăвĕпе иртнине, вăл халăхсен хушшинчи туслăха çирĕплетме пулăшнине палăртрĕ.

ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев паян Чăваш Ен 128 халăха, 8 этника ушкăнне тата 14 конфессие пĕрлештернине каларĕ. Юлашки вăхăтра нумай нацилĕ Чăваш Ен пурăнмашкăн хăтлă, хăвăрт аталанакан регион пулса тăнине палăртрĕ.

«Хаклă туссем! Эпир пурте çирĕп, вăйлă, пĕрлĕхлĕ Раççейре, чечекленекен Чăваш Енре пурăнасшăн! Республикăри халăхсен культури, чĕлхи, йăлийĕрки – хаклă пуянлăх! Пĕрлехи вăйпа эпир татах та нумай тума пултаратпăр! Пĕрлĕхре – пирĕн вăй! Чăваш Енри халăхсене килĕштерсе пурăннишĕн, пĕрпĕрне хисепленишĕн тав тăватăп! Съезда хутшăнакансене ăнăçлă ĕçлеме, умри плансене пурнăçа кĕртме сунатăп», – терĕ Михаил Игнатьев.

Раççей Халăхĕсен ассамблейин Канашĕн ертÿçи Светлана Смирнова ассамблея ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕ. 1990 çулсенче унăн тĕп тĕллевĕсенчен пĕри культурăна, чĕлхене, йăла-йĕркене упраса хăварасси пулнă. Халĕ вĕсемпе пĕрлех Раççейри нацисен пĕрлĕхне çирĕплетесси, граждансен пĕрешкел шухăшне йĕркелесси тата Раççейри халăхсен ăс-тăн тĕнчине аталантарасси тĕп вырăнта шутланать. Светлана Константиновна халăхсен пуçарăвне ырласа республикăра съезд ирттерме майсем туса панăшăн Михаил Игнатьева тав турĕ.

Съезд йĕркелени республикăшăн çав тери пĕлтерĕшлĕ пулнине каларĕ Альбир Крганов. «Юлашки вунă çулта пирĕн халăхсем туслăх çирĕплĕхне тĕрĕслерĕç, халĕ çав никĕс çинче пĕрпĕрне хисеплесе ĕçлеççĕ», – терĕ вăл.

Çĕршыври халăхсен пĕрлĕхне упраса хăварас тĕлĕшре Чăваш Ен тĕслĕх вырăнĕнче пулнине пĕлтерчĕ Николай Дроздов. «Малашне Мускавра Раççейри тата тĕнчери халăхсен форумне йĕркелес сĕнÿ пур. Ăна чÿк уйăхĕн 4-мĕшĕнче – Халăх пĕрлĕх кунĕнче – ирттермелле. Килĕшетĕр пулсан ку сĕнĕве резолюцие кĕртĕр. Çапла вара çак пулăм Чăваш Енре пурăнакан халăхсен съездĕнче старт илчĕ тейĕпĕр», – терĕ вăл.

Тутарстанри халăхсен Туслăх çурчĕн директорĕ Ирек Шарипов: «Çакнашкал пĕлтерĕшлĕ форум ирттерни çĕршыври тата федерацин Атăлçи округĕнчи обществăпа политика пурнăçĕшĕн кирлĕ ĕç шутланать», – терĕ. Вăл Туслăх çурчĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕ. Вĕсен республика пĕлтерĕшлĕ темиçе программи Пĕтĕм Раççейри конкурсра çĕнтернĕ.

Чăваш Ен халăхĕсен съездне мĕнле хатĕрленни пирки ЧР культура министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Константин Яковлев каласа кăтартрĕ. 26 муниципалитет йĕркеленĕвĕнчен съезда 400 делегат суйланă, 198 делегата – наци культура пĕрлĕхĕсенчен. Хальхи вăхăтра республикăра 34 пĕрлĕх, вĕсенчен 24-шне регистрациленĕ.

Малалла докладсене сÿтсе явма Чăваш Енри наци культура автономисен, обществисен ертÿçисем сăмах илчĕç.

Съездра Чăваш Республикинчи Халăхсен ассамблейине йĕркелесси çинчен пейиту тăратрĕç. Ăна туса хурассине ырларĕç, делегатсем сасăласа çирĕплетрĕç. Унăн Устав проектне йышăнчĕç, çавăн пекех Ассамблейăн Канашне, унăн председательне тата ревизи комиссине суйларĕç. Ертÿçĕ ĕçне Лев Куракова шанса пачĕç.

**Валентина ПЕТРОВА.**

## Кĕрхисене акса пĕтернĕ

**Хĕрлĕ Чутай районĕнчи ял хуçалăх предприятийĕсем кĕрхи культурăсене акса пĕтернĕ.** Вĕсен пĕтĕмĕшле лаптăкĕ – 2050 гектар. Ытларах пайĕ «Коминтерн» хуçалăхра: кĕрхи тулă унта 750 гектар йышăнать. Çавăн пекех ку тĕлĕшпе Н.Лисаев фермер та тăрăшса ĕçленине палăртмалла. Кунта кĕрхисем – 500 гектар. Хальхи вăхăтра «Коминтерн», «Свобода» хуçалăхсенче силос валли куккурус выраççĕ.

# Культура çурчĕ çĕкленет

**Вăрмар районĕнчи Энĕшпуçĕнче 150 çын вырнаçмалăх çĕнĕ культура çурчĕ тума тытăнаççĕ.** Вăл яллă территорисене çирĕп аталантарас тĕлĕшпе йĕркеленĕ федерацин тĕллевлĕ программи пулăшнипе çĕкленет. Ăна тума кăçал 12,6 млн тенкĕ уйăрнă. Пĕтĕмпе объект хакĕ 27 млн тенке кайса ларать. Клуба çитес çул хута ямалла.

Виçĕм кун çĕнĕ культура "вучахĕ" ялкăшма тытăнмалли вырăн никĕсĕнче асăнмалăх капсула хурса хăварнă. Ку тĕлĕшпе йĕркеленĕ савăнăçлă мероприятие ЧР ял хуçалăх министрĕ Сергей Артамонов, ЧР культура, национальноçсен ĕçĕсен тата архив ĕçĕн министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Константин Яковлев тата ыттисем те хутшăннă.

Федерацин тĕллевлĕ программипе килĕшÿллĕн республикăра тата 2 канупа культура учрежденийĕ тума палăртнă: Çĕрпÿ районĕнче – клуб, Елчĕк районĕнче – нумай функциллĕ культура центрĕ.

# Хĕле хатĕрленсе

**Республикăра пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх объекчĕсене хĕле хатĕрлесси вырăнсенче çирĕплетнĕ графикпа пурнăçланать.** Хутса ăшăтма кирлĕ чухлĕ топливо хатĕрленĕ. Котельнăйсене тата пысăк категорири объектсене резервпа усă курса тивĕçтерме 391 энерги паракан çăлкуç пур.

Хĕле кĕтсе илме топливăпа энергетика комплексĕнчи объектсен – 99,3, коммуналлă хуçалăхрисен 97 процентĕ хатĕр. Кун çинчен ĕнер ЧР Министрсен Кабинечĕн ларăвĕнче пĕлтернĕ.

Йĕпреç, Комсомольски, Хĕрлĕ Чутай, Муркаш, Етĕрне, Елчĕк, Тăвай районĕсенче хатĕрленÿ ĕçĕсене вĕçленĕ.

Централизациленĕ майпа хутса ăшăтакан тытăмри 4054 нумай хваттерлĕ çуртран 97,9 процентĕнче пăрăхсене çуса тасатнă, тĕрĕсленĕ. Республикипе 96 процент чухлĕ ĕçе йĕркелесе çитернĕ. Элĕк, Красноармейски, Сĕнтĕрвăрри, Муркаш, Шăмăршă, Çĕмĕрле районĕсенче ăна вĕçленĕ.

КПРФ
Выборы в Госсовет Чувашии
НАШ ЛИДЕР - ШУРЧАНОВ
Голосуй правильно! за № 5 в избирательном бюллетене
"ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕ çинчен" саккунăн 48-мĕш ст. килĕшӳллĕн "КПРФ" политика партине пичет калăпăшне тӳлевсĕр панă

ГОЛОСУЙТЕ ЗА ПАРТИЮ ПЕНСИОНЕРОВ!
ЗА ДЕТЕЙ! ЗА ВНУКОВ! ЗА ДОСТОЙНУЮ ЖИЗНЬ!
"ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕ çинчен" саккунăн 48-мĕш ст. килĕшӳллĕн "Российская партия пенсионеров за справедливость" политика партине пичет калăпăшне тӳлевсĕр панă

ФИЛИМОНОВ Валерий Николаевич,
кандидат в депутаты Государственного Совета Чувашской Республики.
Объединимся во имя общей цели – укрепления и роста мощи страны, процветания родной Чувашии.
Голосуем за Единую Великую Россию!
ЕДИНАЯ РОССИЯ
Площадь предоставлена на безвозмездной основе зарегистрированному кандидату в депутаты Государственного Совета Чувашской Республики по Привокзальному одномандатному округу № 16 В.Н. Филимонову

18 СЕНТЯБРЯ ВЫБОРЫ ДЕПУТАТОВ ГОССОВЕТА ЧР
ЛДПР
Площадь предоставлена на безвозмездной основе зарегистрированному кандидату в депутаты Государственного Совета Чувашской Республики по Приволжскому одномандатному округу № 20 К.О. Степанову

18 СЕНТЯБРЯ ВЫБОРЫ ДЕПУТАТОВ ГОССОВЕТА ЧР
ЛДПР
Площадь предоставлена на безвозмездной основе зарегистрированному кандидату в депутаты Государственного Совета Чувашской Республики по Алатырскому одномандатному округу № 1 Д.А. Федорову

18 СЕНТЯБРЯ ВЫБОРЫ ДЕПУТАТОВ ГОССОВЕТА ЧР
ЛДПР
Площадь предоставлена на безвозмездной основе зарегистрированному кандидату в депутаты Государственного Совета Чувашской Республики по Привокзальному одномандатному округу №16 С.В. Шашкову

Юрий СТЕПАНОВ
СР СПРАВЕДЛИВАЯ РОССИЯ
ВЫБИРАЕМ СПРАВЕДЛИВОСТЬ!
Площадь предоставлена на безвозмездной основе зарегистрированному кандидату в депутаты Государственного Совета Чувашской Республики по Моргаушскому одномандатному округу № 8 Ю.В. Степанову

Вячеслав ЧЕБОТАРЕВ
СР СПРАВЕДЛИВАЯ РОССИЯ
ВЫБИРАЕМ СПРАВЕДЛИВОСТЬ!
Площадь предоставлена на безвозмездной основе зарегистрированному кандидату в депутаты Государственного Совета Чувашской Республики по Восточному одномандатному округу № 14 В.Н Чеботареву

18 СЕНТЯБРЯ ВЫБОРЫ ДЕПУТАТОВ ГОССОВЕТА ЧР
ЛДПР
Площадь предоставлена на безвозмездной основе зарегистрированному кандидату в депутаты Государственного Совета Чувашской Республики по Восточному одномандатному округу № 14 А.А. Федотову

Владимир ФЕДОРОВ
СР СПРАВЕДЛИВАЯ РОССИЯ
ВЫБИРАЕМ СПРАВЕДЛИВОСТЬ!
Площадь предоставлена на безвозмездной основе зарегистрированному кандидату в депутаты Государственного Совета Чувашской Республики по Вурнарскому одномандатному округу №3 В.Н. Федорову

18 СЕНТЯБРЯ ВЫБОРЫ ДЕПУТАТОВ ГОССОВЕТА ЧР
ЛДПР
Площадь предоставлена на безвозмездной основе зарегистрированному кандидату в депутаты Государственного Совета Чувашской Республики по Ядринскому одномандатному округу № 9 О.Н. Угабаевой

18 СЕНТЯБРЯ ВЫБОРЫ ДЕПУТАТОВ ГОССОВЕТА ЧР
ЛДПР
Площадь предоставлена на безвозмездной основе зарегистрированному кандидату в депутаты Государственного Совета Чувашской Республики по Чебоксарскому одномандатному округу №11 А.В. Толстову

Валерян ТЕПЛОВ
СР СПРАВЕДЛИВАЯ РОССИЯ
ВЫБИРАЕМ СПРАВЕДЛИВОСТЬ!
Площадь предоставлена на безвозмездной основе зарегистрированному кандидату в депутаты Государственного Совета Чувашской Республики по Комсомольскому одномандатному округу №4 В.Н. Теплову

Николай ЯКОВЛЕВ
Кандидат в депутаты Государственного Совета Чувашской Республики по Моргаушскому одномандатному избирательному округу № 8
Яблоко
Площадь предоставлена на безвозмездной основе зарегистрированному кандидату в депутаты Государственного Совета Чувашской Республики по Моргаушскому одномандатному округу № 8 Н.П. Яковлеву

Луиза ШОГУЛИНА
СР СПРАВЕДЛИВАЯ РОССИЯ
ВЫБИРАЕМ СПРАВЕДЛИВОСТЬ!
Площадь предоставлена на безвозмездной основе зарегистрированному кандидату в депутаты Государственного Совета Чувашской Республики по Чебоксарскому одномандатному округу №11 Л.В. Шогулиной

ЕДИНАЯ РОССИЯ
«ЕДИНАЯ РОССИЯ» – ОПОРА ПРЕЗИДЕНТА
Площадь предоставлена на безвозмездной основе зарегистрированному кандидату в депутаты Государственного Совета Чувашской Республики по Моргаушскому одномандатному округу № 8 А.И. Федотову

ЕДИНАЯ РОССИЯ
СТРОИМ СИЛЬНУЮ РОССИЮ!
Площадь предоставлена на безвозмездной основе зарегистрированному кандидату в депутаты Государственного Совета Чувашской Республики по Западному одномандатному округу № 18 А.А. Углову

ЕДИНАЯ РОССИЯ
«ЕДИНАЯ РОССИЯ» – ОПОРА ПРЕЗИДЕНТА
Площадь предоставлена на безвозмездной основе зарегистрированному кандидату в депутаты Государственного Совета Чувашской Республики по Заводскому одномандатному округу №12 О.Б. Таланову

КПРФ
Голосуйте за кандидата от КПРФ:
ЧЕРНОВ Иван Георгиевич
Площадь предоставлена на безвозмездной основе зарегистрированному кандидату в депутаты Государственного Совета Чувашской Республики по Цивильскому одномандатному округу № 7 И.Г. Чернову

Руслан ФРОЛОВ
СР СПРАВЕДЛИВАЯ РОССИЯ
ВЫБИРАЕМ СПРАВЕДЛИВОСТЬ!
Площадь предоставлена на безвозмездной основе зарегистрированному кандидату в депутаты Государственного Совета Чувашской Республики по Батыревскому одномандатному округу № 2 Р.Ю. Фролову


ФЕДОРОВ
Виктор Васильевич
ЯБЛОКО
с. Турмыши, Янтиковского р-на
Став депутатом, буду служить простому рабочему народу.
За правду, за порядок!
Площадь предоставлена на безвозмездной основе зарегистрированному кандидату в депутаты Государственного Совета Чувашской Республики по Заводскому одномандатному округу №12 В.В. Федорову

ЕДИНАЯ РОССИЯ
СТРОИМ СИЛЬНУЮ РОССИЮ!
Площадь предоставлена на безвозмездной основе зарегистрированному кандидату в депутаты Государственного Совета Чувашской Республики по Южному одномандатному округу №13 В.Г. Тимофееву

Андрей СУВАРИН
СР СПРАВЕДЛИВАЯ РОССИЯ
ВЫБИРАЕМ СПРАВЕДЛИВОСТЬ!
Площадь предоставлена на безвозмездной основе зарегистрированному кандидату в депутаты Государственного Совета Чувашской Республики по Юго-Западному одномандатному округу № 19 А.Д. Суварину

КПРФ
Голосуйте за кандидата от КПРФ:
ТЕМКИН Михаил Александрович
Площадь предоставлена на безвозмездной основе зарегистрированному кандидату в депутаты Государственного Совета Чувашской Республики по Новоюжному одномандатному округу №15 М.А. Темкину

18 СЕНТЯБРЯ ВЫБОРЫ ДЕПУТАТОВ ГОССОВЕТА ЧР
ЛДПР
Площадь предоставлена на безвозмездной основе зарегистрированному кандидату в депутаты Государственного Совета Чувашской Республики по Цивильскому одномандатному округу № 7 Е.Н. Степанову


# Ĕç ăсталăха юратать

**Паян Чăваш наци вулавăшĕнче «Ĕç сынни – Чăваш Ен мухтавĕ» электрон кăларăмĕн хаклавĕ иртет.**

Ĕç – пурнăç тыткăчи. Çын мĕнле ĕçре вăй хуни пĕлтерĕшлĕ мар: вăл ача садĕнче воспитательте е заводра рабочире тăрăшать, тухтăр е фермер пулса ĕçлет. Чи кирли – кирек хăш ĕçе те юратса, чунпа парăнса пурнăçлани. Ахальтен мар чăваш халăхне сутта кăларакан Иван Яковлевич Яковлев çапла каланă: «Юратса тусан чи пĕчĕкçĕ ĕçе те чаплăлантарса яма, усă паракан тума пулать. Ӳркенсе ытахальтен анчах ĕçлесен чăн пысăк ĕç те пăрахăçа тухать, хисепрен каять».

Кашни ĕçе хаклама пĕлмелле. 2013 çулта Раççей Президенчĕ Владимир Путин Указĕпе килĕшӳллĕн Раççей Федерацийĕн Ĕç Геройĕ ятне çирĕплетнĕ. Ăна нумай çул тӳрĕ кăмăлпа, тăрăшса ĕçленĕ çын тивĕçет. Ку ята иртнĕ ĕмĕрти 20-мĕш çулсенчех пуçарса янă. Ыраă пулăма халĕ каялла тавăрнă.

2016 çул Чăваш Енре – Ĕç çыннин çулталăкĕ. Çавна май республикăра тĕрлĕ мероприяти иртет. Наци вулавăшĕн тата ЧР патшалăх истори архивĕн ĕçченĕсем ĕç çыннине халалласа электрон кăларăмĕ хатĕрленĕ. Сборнике Социализм Ĕçĕн Геройĕсем тата Чăваш АССРĕн Паттăрлăхпа Ĕç Мухтавĕн Хисеп Кĕнекине кĕме тивĕçнĕ çынсем çинчен статьясем кĕртнĕ. Унта 203 ентеш кун-çулне çутатнă. Вĕсенчен чылайăшĕ Чăваш Енре çуралса ӳснĕ. Çавăн пекех ытти тăрăхран та пур. Биографи статийипе пĕрлех портрет, хаçат-журналта пичетленнĕ материалсем те вырнаçтарнă.

# Кино – уçă сывлăшра

**Кăçал Раççейре – Кино çулталăкĕ. Ăна халалласа Чăваш Енре авăн уйăхĕн 13-29-мĕшĕсенче «Уçă сывлăшри кино» фестиваль иртет.** Унăн йĕркелӳçи – ЧР электронпа кинодокументаци патшалăх архивĕ. Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев пулăшăвĕпе çак проект гранта тивĕçнĕ.

Хăйнеевĕр кино-караван республикăри 5 хулапа районта пулĕ. Кинофестиваль 6 лапамра виçĕ эрнене яхăн ытларикунпа кĕçнерникун ĕçлĕ. Вăрмар, Çĕмĕрле, Куславкка районĕсенче тата Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хулисенче уçă сывлăшра кинотеатрсем йĕркелĕç. Куракансем Раççей тата наци фильмĕсемпе паллашĕç.

Фестиваль вăхăтĕнче Маргарита Евтушевскаян «Чăваш амазонкисем», Марат Никитинăн «Хорло», Вячеслав Ориновăн «Çĕнĕ шăпăр çĕнĕлле шăлать» фильмĕсен презентацийĕсем иртĕç. Куракансем вĕсен йĕркелӳçисемпе тĕл пулса калаçма та пултарĕç.

Çак проект Чăваш Еншĕн çĕнĕлĕх шутланать. Вăл малашне республикăри хуласемпе районсенче уçă сывлăшра кино кăтартмалли лапамсем уçма май парĕ.

# Суйлама вăхăт

Федераци шайĕнче çăмăллăхпа усă куракансем 2017 çулта соцпакета – тӳлевсĕр эмел тата социаллă пулăшу пуххи – суйлĕç е ун вырăнне укçа илĕç? Çак ыйтăва юпа уйăхĕн 1-мĕшĕччен татса памалла.

Çулсерен заявлени çырса пĕлтермелле мар. Ку йĕркене темиçе çул каяллах пăрахăçланă. Çăмăллăхпа усă куракан хальчченхи лару-тăрăва улăштарас тесен кăна заявлени кирлĕ. Тĕслĕхрен, халĕ вăл тӳлевсĕр эмел илсе тăрать, 2017 çулта вара укçа тивĕçесшĕн е хирĕçле.

Ытларах чухне 2015 çул вĕçĕнче е 2016 çулта инвалида тухнă çынсем заявлени çыраççĕ.

Çулталăк пуçланнăранпа Чăваш Республикинче 1,7 пин çын заявлени çырса соцпакета (туллин е унăн пĕр пайне) йышăнманнине пĕлтернĕ. Тӳлевсĕр эмелпе тата социаллă пулăшу пуххипе тивĕçтерме 165 заявлени панă.

Заявленисене Пенси фондĕнче те, нумай функциллĕ центрсенче (МФЦ) те йышăнаççĕ.

Соцпакета тивĕçлине пĕлтерме тата социаллă тӳлевсем çинчен информаци илме Пенси фончĕн сайтĕнчи (www.pfrf.ru) "Уйрăм гражданинăн кабинечĕ" ("Личный кабинет гражданина") пулăшать. Çапла тума Патшалăх пулăшăвĕсен пĕрлехи порталĕнче регистрациленмелле тата учет çыравне Пенси фондĕнче, е МФЦра, е халăха ĕçпе тивĕçтерекен службăра, е "Ростелекомра", е саккаслă çыру илнĕ чух çирĕплетмелле. Патшалăх пулăшăвĕсен пĕрлехи порталне кĕмелли пароль "Уйрăм кабинета" кĕме те пулăшать.

Соцпакет висĕ пайран тăрать: эмелпе, санаторире сипленмелли путевкăпа тата транспорт тӳлевĕпе тивĕçтерессипе. Висçĕшĕнпе туллин е пакетăн уйрăм пайĕсемпе усă курма юрать.

Хальхи вăхăтра тулли соцпакетăн хакĕ уйăхра 995 тенкĕ те 23 пуспа танлашать, çав шутра эмел пайĕ (врач рецепт тăрăх çырса панă тӳлевсĕр эмел) – 766 тенкĕ те 55 пус, санаторипе курорт пайĕ (врач сĕнĕвĕпе санаторие кайма илнĕ путевка) – 118 тенкĕ те 59 пус, транспорт пайĕ (хула çывăхĕнчи пуйăспа тӳлевсĕр çӳреме тата санаторие кайса килме) – 110 тенкĕ те 09 пус.

Чăваш Республикинче паян федераци çăмăллăхĕпе 104,5 пин çын усă курать, ытларах пайĕ – инвалидсем (83,6 пин). Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннисем, çапăçусене хутшăннă ветерансем, салтак арăмĕсем, радиаци инкекне пĕтерме пулăшнисем тата ытти категорири граждансем те федераци шайĕнчи çăмăллăхпа усă куракансем шутланаççĕ.

## ШӲТСЕМ

Вова аслашшĕне:

– Хăвăн пенсирен мана 10 пин параймăн-ши? Хам пенсие тухсан тавăрса пама шантаратăп.

– Шкул пĕтернĕ хыççăн сирĕн ывăл мĕн тăвасшăн?

– Хальхи пек вĕренсен ÿсĕм çулне кура шкул саккинченех пенсие кайĕ.

Арçынсем утмăл çула çитиччен ăслăланма тăрăшаççĕ. Ун хыççăн пенсие тухаççĕ те çамрăкланма пуçлаççĕ.

Курортра чи хитре хĕрсем отпуск вĕçленнĕ чух курăнма пуçлаççĕ, ĕçре вара – пенсие тухма вăхăт çитсен.

## ПАХЧАÇĂ

# Ыхра

Ку таранччен ыхрана кăларса пуçтарнă ĕнтĕ. Чылайăшĕ ăна, ахăртнех, упрама та хунă. Апла пулин те тĕрлĕ управăн мелне пĕлни чармасть.

Чи ансатти тата шанчăкли – типĕ ыхрана пахчаçимĕç упрамалли пластик ещĕке хурса нӳхрепе антарни. Унта вăл çуркуннечченех аван упранать. Анчах хуралтă типĕ пулсан кăна, унти сывлăш температури хĕлле 5 градусран пысăк пулмалла мар.

**ШĂНТСА УПРАССИ**

Ун çинчен эпĕ нумаях пулмасть пĕлтĕм.

Ыхра шăлĕсене хуппинчен тасатмалла, аш арманĕ витĕр кăлармалла. Пăтă пек пулсан чей кашăкĕпе пăр формине тултармалла. Хутăш часах пăрланать, хăйне майлă кубиксем пулаççĕ. Вĕсене силлесе кăларатăп та полиэтилен хутаçа яратăп, морозильника хуратăп.

Шăнтнă ыхра питĕ вăрах упранать, холодильникран кăларсан часах ирĕлет.

**ТИП ÇУРА**

Тепĕр чухне йĕркеллĕ ыхра пăхса ÿстерейместпĕр: хурт-кăпшанкă сиенлетет, пăнчăсемпе витĕнет. Кунашкаллипе мĕн тумалла? Ăна яланхи пек упраймастăн, çисе те яраймастăн. Пирвайхи мелпе усă курса шăнтма пулать-ха. Унсăр пуçне сиенленнĕ вырăнсене каснă ыхрана стерилизациленĕ банкăна хумалла та тип çу ямалла. Унтан кĕленче савăта пысăкăх мар шăтăклă полиэтилен хупăлчапа хупламалла. Холодильника лартмалла. Кун пек вăл чи нумай вăхăт – икĕ уйăх упранать. Çавăнпа апат валли хăвăртрах усă курма тăрăшмалла. Ырă шăршă çапнă çăва та апата хушмалла.

**Ксения ГРИГОРЬЕВА. Тăвай районĕ.**

# Çĕрулми вăрах упрантăр



**Çĕрулми вăрах упрантăр тесен çак сĕнӳсемпе усă курма тăрăшăр:**

✓ ун çине пăчкă кĕрпи тултарнă михĕ е пĕр сий хĕрлĕ кăшман хурăр – тымарçимĕç тата шыв çăтакан материал ытлашши нӳрĕке туртса илеççĕ;

✓ тĕрлĕ сортлă çĕрулмине уйрăм упрăр;

✓ упрама хунă çимĕç çине маччаран шыв ан тумлатăр тесен çĕрулми çийĕн полиэтиленпа усă курса çакăнса тăракан "маччă" тăвăр;

✓ управри "иккĕмĕш çăкăршăн" температура улшăнманни, пĕр пек тăни пĕлтерĕшлĕ. Пĕр-икĕ градус ăшăраххи те нӳрĕ хуралтăра çĕрулмине калчалантарать, типĕре вара пĕркелентерет;

✓ упрама хуриччен лайăх суйламалла, сиенленнисене тата шăнисене ямалла мар, унсăрăн саппасăн пысăк пайĕ çĕрме пултарать;

✓ ан çĕртĕр тесен çĕрулми çийĕн сийпе пилеш, армути, упа сарри курăкĕн е упа паланĕн (бузина) çулçине хумалла.

**ШĂТĂК ЧАВСА**

Хăш-пĕр кил хуçин нӳхрепĕнче нӳрĕк ытларах пулать, унта хĕлле çĕрулми упраймăн. Кун пек чух пахчара ятарлă шăтăк чавмалла.

Çӳллĕ те типĕрех вырăн суйласа илĕр, унта çĕр айĕнчи шыв тарăн пултăр. Икĕ метра яхăн диаметрлă тата 1 метр çурă тарăнăш шăтăк чавăр, çумăр шывĕ айккине юхса кайма канавсем йĕркелĕр. Шăтăк стенине тата тĕпне улăм хумалла. Çĕрулмине унта тултармалла, анчах туличчен 40-60 см яхăн вырăн хăвармалла. Çиелтен типĕ улăмпа е хăмапа хупламалла, малтанлăха 10 см хулăнăш тăпра сармалла, сивĕсем пуçланас умĕн сий хулăнăшне 40-80 см çитермелле. Шăтăк тăрринчен çĕр çӳллĕшĕ çур метр яхăн пулмалла. Вентиляци йĕркелемелле: сывлăш выляма шăтăк тĕпне çитиччен пластик пăрăх вырнаçтармалла е ăна хămаран тумалла.

**Виталий ПЕТРОВ. Шупашкар районĕ.**

# Тухăçлă ÿсме

Лайăх ÿсме кишĕре пĕр талăк ытла лартнă шывпа кăна шăвармалла. Утă уйăхĕн вĕçĕнче е çурла уйăхĕн пуçламăшĕнче апатлантармалла. Каçхине йăрана лайăх шăвармалла, çумкурăкран тасатмалла. Унтан йăран çине йывăç кĕлне сапмалла: 1 тăваткал метра 1 стакан.

## ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ

# Хăш зонăна лекнине кура

**? Пăрачкав, Улатăр районĕсенче сыснан Африка мурне пула килти мĕнпур выльăха илсе тухса кайнă теççĕ. Эпир инçерех пурăнатпăр, анчах кунта та сысна çурисене пĕтересси çинчен калаçаççĕ. Эпĕ пенсире, час-часах чирлетĕп. Пайтах тăкакланса пăхса ÿстернĕ выльăха парса ярас килмест. Пирĕн сыснасене те пĕтерĕç-ши?**

**Мария МАТРОСОВА. Канаш районĕ.**



Раççей ял хуçалăх надзорĕн специалисчĕсем палăртнă тăрăх – Африка мурне тупса палăртнă тĕп вырăнта мĕнпур сыснана пусмасăр тĕп тăваççĕ. Сысна ферми, уйрăм вите, выльăх бази, сысна лагерĕ, хушма хуçалăх, ял е унăн пайĕ, уйрăм картиш те чир алхаснă территори чикки шутне кĕме пултарать. Чире тупса палăртиччен тата чирленĕ вăхăтра хăш-пĕр объект (чирлĕ выльăх пулнă вырăнсем) – аш-какая тирпейлекен, упракан, унран продукци хатĕрлекен предприятисем, столовăйри апат-çимĕç блокĕсем, апат юлашкийĕ, сыснана турттарнă транспорт инфекципе сиенленнисем шутланаççĕ.

Чирĕн тĕп вырăнĕсĕр пуçне вăл хăрушлăх кӳрекен, çывăхра вырнаçнă территорисене палăртаççĕ. Пĕрремĕш зона тĕп вырăнтан 5-20 км таврашĕнчи территорие çавăрса илет. Иккĕмĕшĕ – 100-150 км радиусрине.

Пĕрремĕш зонăна кĕрекен тăрăхри мĕнпур сыснана шута илеççĕ, хуçалăх ертӳçисене, кил хуçисене хăйсем тĕллĕн сыснана сутма, урăх вырăна куçарма, витерен кăларма юраманнине хут çыртарса асăрхаттараççĕ.

Кĕске вăхăтра халăхран мĕнпур сыснана пуçтараççĕ, ун хыççăн предприятипе организацинчи пекех пусма çывăхри аш-какай комбинатне е çакăн валли йĕркеленĕ пунктсене (вĕсене ятарлă комисси палăртать) ăсатаççĕ.

Хăрушлăха лекме пултаракан иккĕмĕш зонăра пасарта сысна какайне тата унран хатĕрленĕ продукта сутма чараççĕ.

Территорири мĕнпур сысна пуçне çĕнĕрен шутлаççĕ. Ăна кĕтĕве кăларма чараççĕ. Ветеринари мероприятийĕсемпе килĕшӳллĕн чирсенчен вакцинаци тăваççĕ.

Тĕрлĕ йышши хуçалăхсенчи сывă сыснасене тăтăш тĕрĕслесе тăраççĕ.

# Уйрăмлăх пур

**? "Эдильбаевская" ăратлă сурăхпа "романовская" хушшинче уйрăмлăх пур-и?**

**Виталий ГОРБУНОВ. Пăрачкав районĕ.**

"Эдильбаевская" ăратли самай пысăкрах.

Йăха тăсас тĕлĕшпе те уйрăмлăх пур. "Романовская" сурăх пĕр вăхăтра висĕ путек пăранлама (çулталăкра иккĕ пăранлаканни те пур) пултарать, "эдильбаевская" вара çулталăкне икĕ путекпе савăнтарсан та темĕн пекех.

Анчах икĕ ăратран хăшĕнчен ытларах аш тухнине шутласа пăхман.

Нарăс уйăхĕнчен пуçласа амăшĕн сĕчĕпе ÿснĕ, ун хыççăн кĕтӳре çӳретнĕ "эдильбаевская" ăратлă така 30 кг яхăн аш пама пултарать. Çакă "романовская" ăратăн 4-5 тушкипе танлашать. Унăн ашĕнче шăмă та сахалрах.

Пăрлак çанталăкра та вăл "романовская" ăрат пек тăтăш аманмасть, урине хуçмасть, çирĕп пырать.

"Эдильбаевская" сурăх ашне туянакансем ăна питĕ ырлаççĕ, шăршă палăрмасть теççĕ.

Унсăр пуçне курдюклă сурăх пулнăран унран çу нумай тухать. Унпа апат тути лайăхланать.



## АСАННЕ АРЧИНЧЕН

● Тăпăрчăран апат-çимĕç хатĕрленĕ чухне ăна ала витĕр кăларсан тути лайăхланать.

● Ăшаланă аш сĕткенлĕ пултăр тесен ăна ăшă шывра кăштах тытмалла.

● Çĕрулмине хăвăрт пĕçерме шыва маргарин е çу хушмалла.

● Макарон пĕр-пĕрин çумне çыпçăнасран вĕрекен шыва кăштах (1 чей кашăкĕ) ўсен-тăран çăвĕ ямалла.

● Сыра темиçе сахăр катăкĕ хунă савăтра упрамалла.

## ЧИПЕРЛЕНЕР-И?

❖ Пахчаçимĕçе тасатнă хыççăн алла 3 минутлăха уксус хушнă вĕри шывра тытмалла, вăл çемçелет, çуталать.

❖ Пĕркеленчĕке пĕтерме пите куллен сĕтпе сĕрмелле.

❖ Сăн-пите çамрăклатма тасатман ўсен-тăран çăвĕ пулăшать. Унпа эрнере 2-3 хут усă курмалла.

❖ Хĕрен тымарĕ ўте шуратать, чĕкеç шатрине пĕтерет. Унăн сĕткенне хăймапа (пĕр пек виçепе) хутăштармалла, ўте сĕрмелле, 5 минут тытмалла, çумалла. Хĕрен çўç тымарне те çирĕплетет, лĕкке пĕтерет.



❖ Вăрăмтуна çыртсан ўте уксус сĕрмелле. Кĕçĕтни, хĕрелсе шыççăнни часах иртĕ.

## ТĔПЕЛ

# Хĕле валли

### «УКРАИНА» САЛАТ

*Кирлĕ пулать: 2 кг помидор, 1,5 кг пылак пăрăç, 800 г пуçлă сухан, 1 кг кишĕр, 4 апат кашăкĕ сахăр, 2 апат кашăкĕ тăвар, 1 стакан тип çу, 100 г уксус (9 процентлă), техĕмлĕ пăрăç (10 шт.), гвоздика (10 шт.), лавр çулçи (10 шт.).*

Помидора – касăкпа, сухана – çурма çаврашкан, пăрăça улăм пĕрчи евĕр турамалла, кишĕре шултра теркăпа хырмалла. Пурне те хутăштармалла, тăвар, сахăр, тип çу тата уксус хушмалла, вăйсăр çулăм çинче вĕрилентермелле, стерилизациленĕ банкăсене тултармалла. Кашни савăта лавр çулçи, пăрăç тата гвоздика ямалла, хупăлчине хурса стерилизацилемелле (0,5 л банкăна – 20 минут), хупмалла, кутăн çавăрса лартмалла.

### КЕТЧУП

*Кирлĕ пулать: 4 кг помидор, пылак пăрăç (5 шт.), пуçлă сухан (8 шт.), 3 апат кашăкĕ тăвар, 2 чей кашăкĕ авăртнă хĕрлĕ пăрăç, 3/4 стакан сахăр, пĕрчĕллĕ хура пăрăç (10 шт.), 1 чей кашăкĕ корица, 1/2 чей кашăкĕ лимон йўçекĕ, 1 стакан уксус.*

*Пахчаçимĕçе* çумалла, турамалла, пурне те хутăштармалла, кастрюле ярса 1,5 сехет пĕçермелле, сивĕтмелле, ала витĕр кăлармалла, авăртнă хĕрлĕ пăрăç, сахăр, пĕрчĕллĕ хура пăрăç (вĕтетсе), корица, лимон йўçекĕ, уксус хушмалла, пăтратмалла. Çулăм çине лартса 30 минут вĕретмелле, стерилизациленĕ банкăсене тултармалла, хупламалла, кутăн çавăрса лартмалла.

### КУПĂСТАПА ПОМИДОР САЛАЧĔ

*Кирлĕ пулать: 1 кг купăста, 1 кг помидор, пылак пăрăç (2 шт.), 2 пуç сухан.*

*Маринад валли: 100 г сахăр, 250 мл уксус, пĕрчĕллĕ хура пăрăç (2-3 шт.), 50 г тăвар.*

Помидора – касăкпа, сухана – çурма çаврашкан, купăстапа пылак пăрăça улăм пĕрчи евĕр турамалла, хутăштармалла, кастрюле ямалла, диаметрпа пĕчĕкрех турилккепе хупламалла, ун çине йывăр пусаркăç хумалла, çĕр каçармалла. Сĕткен тухсан маринад валли хатĕрленĕ специсене тата уксус хушмалла, пăтратмалла, çулăм çине лартса 10 минут (вĕреме кĕнĕ хыççăн) пĕçермелле. Вĕри салата стерилизациленĕ банкăсене тултармалла, хупламалла, кутăн çавăрса лартмалла, ăшă япалапа чĕркемелле, сивĕниччен тытмалла, сивĕ вырăнта упрамалла.

# Çурт-йĕре тасатма

◆ Шурă тĕспе сăрланă алăка апат соди хушнă шыв (1 л шыва 1 апат кашăкĕ) лайăх тасатать.

◆ Йывăç алăка нашатырь спирчĕ янă шывпа (1 л шыва 1-2 апат кашăкĕ) е çĕрулми пĕçернĕ шывпа çумалла.

◆ Паркет урая пылесоспа кăна тасатмалла.

◆ Линолеума кĕпе супăнĕпе кăпăклантарнă лĕп шывпа çумалла.

## ЫЙТУ – ХУРАВ

# Мăшкăла хăçанччен тўсмелле?

**Кўршĕсем пирĕн çуртпа юнашарах гараж туса лартрĕç. Вĕсен хушши – 2 метр та 60 сантиметр. Кашни çулах çак хутлăхра 25-шер хур, 15-20-шер кăвакал тата чылай бройлер тытаççĕ. Çавна май эпир çывăракан пўлĕмре сывлама та çук. Шăршă чўречерен кĕрет.**

**Хур-кăвакала унта ан усрăрха тесе темиçе хутчен те каларăмăр, анчах кăлăхах. Миçе çул ĕнтĕ эпир çак мăшкăла тўсетпĕр. Çĕрĕпе вĕсем мĕн тĕрлĕ сасă кăлармаççĕ пулĕ. Çур çĕр иртсе икĕ сехет çурăра тытăнаççĕ те мĕн ирччен какăлтатаççĕ. Пире канлĕ çывăрма памаççĕ. Çитменнине çумăрлă çанталăкра кайăк-кĕшĕк каяшĕ унта-кунта сирпĕнет, чўречене те вараласçĕ.**

**Эпир, мăшăрпа иксĕмĕр, ватă çынсем, 75 çулта. Çак мăшкăла хăçанччен чăтмалла? Çуртпа юнашарах хур-кăвакал тытма юрать-и?**

**Николай СЕЛИВАНОВ.**
**Патăрьел районĕ,**
**Кĕçĕн Арапуç ялĕ.**

Паллах, кўршĕр йĕркене пăсни куçкĕрет. Строительство нормипе тата йĕркипе килĕшўллĕн хур-кăвакала кўршĕ çуртĕнчен сахалтан та 12 метртан аяккарах тытмалла. Урăхла каласан, кайăк-кĕшĕк хуралтипе пурăнмалли çурт хушши çакăн чухлĕ пулмалла. Кўршĕ участокĕпе (сад, пахча) кайăк-кĕшĕк хуралтин инçĕшĕ вара – сахалтан та 4 метр. Эсир çырнă тăрăх вĕсен хур-кăвакалĕ хуралтăра мар, усă çĕртех.

Паллах, ыйтăва лару-тăрăва çивĕчлетмесĕр татса пама тăрăшмалла. Енчен те май килмесен ял тăрăхĕпе çыхăнмалла. Кун пек те ĕç тухмасан суда çăхав çырмалла.

## ЧĂННИ ТЕ ПУР-ТĂР

■ Хаклă хăнана ăсатнă кун килти ĕçсене тума юрамасть, унăн ĕçĕ ăнмасть теççĕ.

■ Хĕрт-сурт пулсан килти çынсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнаççĕ, çук пулсан ялан харкашаççĕ, йыш саланать.

■ Чăх авăтсан – инкеке.

■ Чăх кутне улăм çыпăçсан çын вилет теççĕ.

■ Черкке тытсан эрех ĕçиччен малтан кусăпа мачча çине пăхса илмелле. «Эпĕ мар, мачча ўсĕрĕлтĕр», – темелле.

■ Чĕкеç йăвине ватаканăн килçурчĕ çунать теççĕ.

## СЫВЛĂХ

# Усăллă сĕнўсем

♦ Варвиттирен чĕрĕ çăмарта шурри пулăшать. Ăна сарринчен асăрханса уйăрмалла та ĕçмелле. Ĕçме йывăр тăк «Биттнер» бальзампа хутăштармалла.

♦ Тута çине герпес тухсан типĕ тăвар хумалла. Кунне темиçе хут çапла тусан вăл хăвăрт иртет.

♦ Мастопатирен сипленме купăстапа пыл пулăшать. Унăн çулçи çине пыл сĕрмелле те кăкăр çине хумалла, çиелтен – полиэтилен пакет. Ăшă тутăрпа çыхмалла. 1-2 сехетрен çулçа илмелле, кăкăра ăшă шывпа çумалла.

♦ Варикозпа аптракансен çак меслетпе усă курмалла: 250 г ыхра илмелле, теркăпа хырмалла, 350 г шĕвĕ пылпа хутăштармалла, 1 эрне тĕттĕм вырăнта тытмалла. Кунне виçĕ хутчен апат умĕн 30-40 минут маларах 1 чей кашăкĕ ĕçмелле.

♦ Пўрене сивĕ чечекĕн (цикорий) чейне ĕçсе сиплеме пулать.

♦ Апата корица хушсан ўт çине тухакан çу мăкăлĕ (жировик) пĕтет.

♦ Мĕн те пулин çисе наркăмăшлансан укроп шывĕпе пыл хутăштарса ĕçмелле. 1 стакан вĕренĕ шыва 1 апат кашăкĕ ешĕл укроп ярса вăйсăр çулăм çинче 10 минут тытмалла, сăрăхтармалла, 1 апат кашăкĕ пыл ярса пăтратмалла, ĕçмелле. Çак шĕвеке ĕçсен наркăмăшланнă çын хăсма чарăнать. Вăл апат хуранне, пыршăсене тасатать. Симĕс укроп çук пулсан 1 стакан шыва 0,5 апат кашăкĕ укроп вăрри хушма юрать.



Сивĕ чечек

# Сиплĕ курăк

Эндометрит чирĕнчен (маткăн лăймака сийĕ шыçни) боровая матка курăк пулăшать: 0,5 л спирта е шурă эрехе 50 г курăк ямалла, тĕттĕм вырăнта 2 эрне тытмалла. Кунне 3 хутчен апат умĕн 15 минут маларах 20-25 тумлам ĕçмелле.

# Ыхра тата сухан

Вĕсене ытларах арçынсен çимелле. Кунне 1 шăл ыхра е 1 касăк сухан активмеллех. Ыхрапа сухан юн çаврăнăшне лайăхлатаççĕ, юн тымарне сараççĕ. Çавна май шăк хăмпи çумĕнчи ар парĕ шыçасран та упраççĕ.

# Вĕлтĕрен вăрри

Вăл та асăннă чиртен сиплет. Ăна пухнă хыççăн типĕ вырăнта хут пакетра упрамалла. Пылпа хутăштарса пĕчĕк йăвача тумалла. Кунне 3-4 хутчен апат умĕн çимелле. Курс – 1 уйăх. 10 кун каннă хыççăн сиплеве малалла тăсмалла.

# Чĕре таппине йĕркелет

**Ыйхă вĕçсен глицин е чĕре курăкĕн шĕвекне ĕçмелле? Организм хăнăхмĕ-ши?**

Глицин – аминойўçек. Вăл организма питех лăплантараймасть. Çавăнпа та ыйхă вĕçсен тухтăрсем ытларах чĕре курăкĕн шĕвекне ĕçме сĕнеççĕ. Вăл лăплантарнисĕр пусне чĕре таппине йĕркелет, юн пусăмĕн виçине чакарать.

*Асăрхаттарни: халăх сĕнекен сывату меслечĕсемпе усă куриччен тухтăрпа канашласа пăхмалла.*

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Авăн, 15 – кĕçнерникун | Авăн, 16 – эрнекун | Авăн, 17 – шăматкун | Авăн, 18 – вырсарникун | Авăн, 19 – тунтикун | Авăн, 20 – ытларикун | Авăн, 21 – юнкун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 5.23 | 5.25 | 5.27 | 5.29 | 5.31 | 5.33 | 5.35 |
| | анать | 18.08 | 18.05 | 18.02 | 18.00 | 17.57 | 17.55 | 17.52 |
| Кун тăршшĕ | | 12.45 | 12.40 | 12.35 | 12.31 | 12.26 | 12.22 | 12.17 |
| УЙĂХ | тăхри | тулса пырать | тулли уйăх (22.05) | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать |
| | кунĕ | 14-мĕш кун | 15-мĕш кун | 16-мĕш кун | 17-мĕш кун | 18-мĕш кун | 19-мĕш кун | 20-мĕш кун |
| | | Пулă паллинче | Пулă паллинче | Сурăх паллинче | Сурăх паллинче | Вăкăр паллинче | Вăкăр паллинче | Йĕкĕреш паллинче |

ТУСЛĂХ

**Иртнĕ вырсарникун Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Чĕмпĕр облаçĕн кĕпĕрнаттăрĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Сергей Морозов чĕннипе Чĕмпĕр хулин уявне халалланă мероприятисене хутшăннă.**

# Чĕмпĕрте – Чăваш картишĕ



Сăнÿкерчĕке www.cap.ru сайтран илнĕ

Çак кун кÿршĕ регионта "Наци ялĕ" культура комплексĕ уçăлнă. "120 наци килĕштерсе, туслă пурăнакан облаçшăн çакă пĕлтерĕшлĕ пулăм. "Наци ялне" чăвашсем пуçласа йĕркелени – пушшех те. Вăл вĕсемшĕн çеç мар, хула çыннисемпе хăнисемшĕн те юратнă кану вырăнĕ пулса тăрĕ. Кунта тăванла халăхăн историйĕпе, культурипе, йăлийĕркипе тата ытти енпе паллашма пултарĕç.

Ырă пуçарăва пуринчен малтан пурнăçа кĕртнĕ Чăваш наци культура автономине тав тăватăп. Çак вырăн Чĕмпĕр çĕрĕ çинче пурăнакан халăхсене пĕтĕçтерессе шанатăп", – палăртнă Сергей Морозов.

Михаил Игнатьев та Чĕмпĕр облаçĕн çыннисене тата йăхташсене саламласа сахал мар ырă сăмах каланă. Вăл асăннă тăрăх – Сергей Иванович Морозов ертсе пыма тытăннăранпа регион аталану çулĕпе çирĕп утать. Тÿпе айĕнче хăйне майлă музей – наци картишĕ – йĕркелени чăвашсемпе тата ыттисене ытти халăхсен культурипе паллашма, унăн историне, этнографине, фольклорне тишкерме хистемелле. Вăл та Ульяновск облаçĕнчи чăваш наци культура автономине, унăн ертÿçине Олег Мустаева, Федоровсене, меценатсене, Чĕмпĕрте чăваш культурине аталантарнăшăн тав тунă.

РФ Патшалăх Думин депутачĕ Владислав Третьяк та çĕнĕ объект нумай нациллĕ Раççей патшалăхне çирĕплетме пулăшасса палăртнă.

"Наци ялĕн" проект строительствинчи пĕрремĕш кирпĕче 2013 çулта Ульяновск облаçĕн кĕпĕрнаттăрĕн хушăвĕпе хунă. Унта вырăс, чăваш, азербайджан, осетин, тутар, еврей, ингуш, эрмен картишĕсем йĕркеленмелле. Чăвашсен музей, наци кухнин ресторанĕ, хăна çурчĕ, наци литературипе пуянлатнă кĕнеке стенчĕ вырнаçнă. Картиш яла аса илтерет, унта çăл, мунча та пур.

Михаил Игнатьев Чĕмпĕр хулине халалланă уява уçма та хутшăннă. Кÿршĕ облаç кĕпĕрнаттăрĕ Сергей Морозов ăна регионсем хушшинчи туслă çыхăнусене çирĕплетес ĕçри çитĕнÿсемшĕн Халăхсен туслăхĕн медалĕпе наградăланă.

**Ирина ПАВЛОВА.**

КУРАВ

# Сад ĕрчетекене çăмăллăх

Хальчен инçетри çĕршывсенчен турттарнă улма-çырлана хамăр патра, Раççейрех, çителĕклĕ ÿстермелле. Çакăн пек тĕллев лартнă патшалăх. Иртнĕ шăматкун Тамбов облаçĕнчи Мичуринск хулинче уçăлнă Пĕтĕм Раççейри "Сад ĕçченĕн кунĕ-2016" куравра РФ ял хуçалăх министерствин департаменчĕн директорĕ Петр Чекмарев кун çинчен тĕплĕнрех пĕлтернĕ.

"Сад ĕçне аталантарасси хальхи вăхăтра чи пĕлтерĕшлисенчен пĕри пулмалла. РФ ял хуçалăх министрĕ Александр Ткачев питомниксен шутне 2-3 хут ÿстерме палăртнă", – асăннă вăл.

Патшалăх сад ĕрчетекенсене май çитнĕ таран пулăшма тăрăшать, ĕçри тăкаксене саплаштарать. Пĕлтĕр федераци бюджетĕнчен уйăрнă укça виçине пилĕк хут ытла ÿстернĕ, пĕтĕмпе вăл 2,5 млрд тенкĕпе танлашнă. Çакă 14,3 пин гектар çинче сад хывма май панă.

ЫРĂ ТĔСЛĔХ

# Ÿкĕнмен, ÿркенмен



### Выльăх самăртакан геолог

Малтанах чăваш ачи космонавт пулма ĕмĕтленнĕ. Кайран шухăшне улăштарнă. Шкул хыççăн Мускаври М.В. Ломоносов ячĕллĕ патшалăх университетне çул тытнă. Вĕренсе тухсан геолог пулса тăнă. Практика вăхăтĕнче тĕрлĕ çулçÿреве пуçтарнă чул катăкĕсем халĕ те ятарлă кутамккара упранаççĕ. Пĕррехинче ачисен куçĕ тĕлне лекнĕ те ашшĕ кашнин çинчен хаваспах каласа кăтартнă.

Мускаври чи сумлă аслă вĕренÿ заведенийĕ пĕтернĕ çамрăк хулара юлас темен, яла таврăннă. Пĕр вăхăт шкулта тăрăшнă хыççăн çĕр ĕçне кÿлĕннĕ. Йĕпреç районĕнчи Туçари Владимир Вячеславович Мусьтакова тепри карьерăшăн çунманшăн ятлĕччĕ пулĕ, анчах кил хуçи çак пурнăç патне çитсе тухнăшăн пач та ÿкĕнменнине палăртать мăшăрĕ.

Лариса Алексеевна та упăшки пекех çĕре çывăх. Çÿнçипе хупăлчи тейĕн. Чĕмпĕр облаçĕнче çуралнăскере 4-5 çултан ашшĕпе амăшĕ хăйсен тăван ялне илсе килнĕ. Малашне çемье кунта тĕпленнĕ. Шкул пĕтерсенех хĕр çамрăк специалистпа çемье çавăрнă. Мăшăрлансан малалла вĕренесси çинчен шухăшлатăн пулсан та тĕллеве пурнăçлама кăткăсрах çав. Ачасем çуралаççĕ, вĕсене пăхмалла, çурт-йĕр çĕнетмелле тата ытти те. Çавах та килти хушма хуçалăха тĕппипех пуçа чикиччен (юлашки икĕ çул вăл фермер хуçалăхĕн ертÿçи) хĕрарăм сутуçăра тăрăшнă.

Ача чухне космоса вĕçме хатĕрленнĕ кил хуçи çĕр патне таврăнсан чи малтан çĕрулми ÿстернĕ. Анчах çемьене тупăш кÿменрен (вăл вăхăтра кил хуçалăхĕнче техника та сахал пулнă) выльăх-чĕрлĕх ытларах ĕрчетме тытăннă. Темиçе ĕне усранă, вăкăр самăртнă. Ăна çынсенчен те туяннă. Пĕтĕмпе выльăх шучĕ 12 пуçа çитнĕ. Ăна тата ÿстерес тĕллевпе çĕнĕ вите тума пуçланă. Çавăнпа услам укçи хальлĕхе йăлт тенĕн строительствăна хывăнать.

Паянхи кун Мусьтаковсен сăвакан виçĕ ĕне, ыттисем – вăкăрсем. Ял çыннисем тынисене вĕсемпе пĕтĕлентерме тăрăшаççĕ, мĕншĕн тесен кăларту çырлахтарать. Авă пĕрисен искусствăллă майпа пĕтĕлентерсен те ĕç ăнман. Мусьтаковсен вăкăрĕсем ăратлă мар, анчах вĕсемпе хутшăннă ĕнесенчен яланах ырă-сывă пăру çуралать. Тепри çак ĕçрен бизнес тунă пулĕччĕ, Владимир Вячеславовичпа Лариса Алексеевна вара укçашăн çунмаççĕ.

### Спортпа туслă çемье

Выльăха çемйипе пăхаççĕ. Утçире çирĕм çулти аслă ывăлĕпе вун çиччĕри хĕрĕ пулăшаççĕ. Кĕçĕнни виççĕ те тултарайман-ха. Çемье вучахне типтерлĕ тытса пыракан хĕрарăм асăннă тăрăх – спорт мероприятийĕсене яланхиллех хутшăнас тĕллевпех çуратнă мар-и пĕчĕккине. Ара, Мусьтаковсен ячĕ ку тĕлĕшпе çĕршыв шайĕнчех палăрнă. Районта, республикăра спорт çемйисем хушшинче мала тухса Раççейри хĕллехи ял спорт вăййисене пĕрре мар хутшăннă. Тĕслĕхрен, виçĕм çул Красноярскран çĕнтерÿпе таврăннă. Малarax Омскра виççĕмĕш вырăна тивĕçнĕ тата ытти те. Пĕтĕмĕшле наградăсен шучĕ те çук темелле. Аслă Мусьтаковсен кăна – 100 ытла, ачисен те чылай. Йĕрке тăрăх – ача 15 çул тултарсан спорт çемйисен ăмăртăвне хутшăнаймăн. Хĕрĕ çав ÿсĕме çитнĕренпе икĕ çул ĕнтĕ. Анчах пăшăрханмалла мар – кĕçĕнни çитĕнсе пырать. Вăл та ашшĕпе амăшне наградăсемпе савăнтарĕ.

Сăпайлă та ĕçчен ачасем пăхса ÿстернĕ Мусьтаковсем. Ыттисем пек кунĕпе компьютер умĕнче ларма хăнăхман, ăна е кăна туянса пар тесе тилмĕрмен. Ывăлĕ инкеке лексе утайми пулсан чи малтанах салтака каяйманни çинчен пăшăрханса калани халĕ те амăшĕн куçĕ умĕнче. Шăла çыртса, вăйне пухса каччă çĕнĕрен утма вĕреннĕ.

Мусьтаковсем каçсерен урама чупма тухаççĕ. Хĕлле йĕлтĕр сыраççĕ, ăмăртусенче çĕнтереççĕ. Владимир Вячеславович пиччĕшĕпе нумаях пулмасть "Буран" йышши мототехника туяннă. Ятарласа хĕлле йĕлтĕрпе чупмашкăн юра хытарса çул уçма.

Раççей шайĕнчи ăмăртусене хутшăнма чаплă йышши йĕлтĕр (вăл çулран çул çĕнелсе пырать), ăна сĕрмелли маç, ботинка, перчетке, тум туянмалла. Тăкакĕ пайтах. Акă, Омска каймашкăн килти икĕ вăкăра сутма тивнĕ. Красноярска та выльăх укçипе çула тухнă.

Ытларах чухне Мусьтаковсем выльăха тутарсене парса яраççĕ. Пусма шел теççĕ. Ача пек пăхса ÿстернĕскере çĕçĕ айне тума алă çавăрăнмасть.

Кĕтÿрен пĕр пуç чаксан та пăшăрханаççĕ çемьере. Паха япалана сухатнăн, тăванран уйрăлнăн туйăнать. Кун пек чух чуна тунсăх пусать.

**Ирина НИКИТИНА.**

ХЫПАР-ХĂНАР

# Ĕç çыннине мухтаса

**Ĕç çыннин çулталăкне халалласа Комсомольски районĕнчи «Çĕр тата çынсем» халăх музейĕ «Ĕç çыннине мухтатпăр» презентаци тата «Аттепе анне профессийĕ» сăнӳкерчĕксен конкурсне йĕркеленĕ.** Унăн тĕллевĕ – çамрăк ăрăва ĕç çыннисемпе паллаштарасси, вĕсене хисеплеме вĕрентесси. Унта 7-18 çулти ачасемпе çамрăксем хутшăнма пултараççĕ.

Презентацисен конкурсĕ валли 15-рен кая мар слайд хатĕрлемелле. Ĕçсене юпа уйăхĕн 10-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

# Ял уявĕ асра юлнă

**Елчĕк ялĕ 428 çул тултарнине уявланă. Çавна май çамрăксем футболла выляс енĕпе ăмăртнă.** Кĕçĕн çулхи ачасем велосипедна ярăнса тупăшнă, çула çитменнисем вара – роликпа. Хĕрсемпе хĕрарăмсем шĕвĕр кĕлеллĕ туфли тăхăнса чупнă. Çавăн пекех уявра «Чи таса кил карти», «Тĕслĕхлĕ подъезд», «Тĕслĕхлĕ нумай хваттерлĕ çурт» конкурссем те йĕркеленĕ. Ĕç çыннин çулталăкне халалласа курав ĕçленĕ. Парикмахерсем пĕрремĕш хут «Ылтăн хачă» конкурсра тупăшнă.

# Кăмпа яшки питĕ тутлă

**Авăн уйăхĕн 23-мĕшĕнче «Чăваш вăрманĕ» наци паркĕнче «Кăмпа уявĕ» фестиваль иртет.** Унта хутшăнакансем кăмпа яшки активме пултарĕç, вăрман çимĕçĕн сиплĕхĕ пирки пĕлĕç. Çавăн пекех курав та иртĕ. Шăмăршă тăрăхĕнчи тĕрлĕ кăмпапа паллашма пулĕ. Кулинарсем вара унран тутлă апат-çимĕç хатĕрлеме вĕрентĕç.

Уявра суту-илӳ ярмăркки те ĕçлĕ.

# Софья, Милана тата Валерия

**Шупашкарта кăçал пĕрремĕш хут виçĕреш çуралнă. Валерий тата Анастасия Леонтьевсен çемйинче малтан пĕр ывăл ӳснĕ.** Халĕ Димăн харăсах виçĕ йăмăк çитĕнет.

Хулари пĕрремĕш клиника больницин тĕп тухтăрĕ Геннадий Драндров палăртнă тăрăх – виçĕрешсем 3-4 çулта пĕрре кун çути кураççĕ.

Хĕрачасене çемье Софья, Милана, Валерия ят панă. Вĕсен сывлăхĕ лайăххине палăртаççĕ тухтăрсем.

Виçĕреше пăхма çăмăл мар паллах. Çавна май ку тĕлĕшпе Леонтьевсене асламăшĕ, кукамăшĕ те пулăшĕ.

**Валентина МАКСИМОВА.**





# Кредит «Пенсионный»

Кредит «Пенсионный» предоставляется без поручителей и залога гражданам РФ в возрасте до 75-ти лет (на момент возврата кредита), находящимся на пенсионном обеспечении и получающим пенсию на счет, открытый в АО «Россельхозбанк», в рублях Российской Федерации на срок до 5 и до 7 лет. Сумма кредита — от 10 тыс. рублей до 500 тыс. рублей. Процентные ставки составляют от 14,5% до 16,75% при условии оформления договора страхования жизни и здоровья. В случае отказа от страхования жизни и здоровья ставка увеличится на 4,5%. Более подробную информацию о размере процентных ставок и об офисах, на которые распространяется действие условий по предоставлению кредита на срок свыше 5 и до 7 лет, уточняйте в офисах Банка. Подробности по телефону, на официальном сайте и в офисах АО «Россельхозбанк».

*При получении кредита в сумме свыше 200 тыс. рублей на срок до 12 месяцев (включительно) действует специальная ставка в размере 14,5% при условии оформления договора страхования жизни и здоровья. В случае отказа от страхования жизни и здоровья ставка увеличивается на 4,5%.

Генеральная лицензия Банка России №3349 (бессрочная). Реклама.

Звонок по России бесплатный

**8 800 200-02-90 | www.rshb.ru**


# РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРӲСЕМ


АУ «Издательский дом «Хыпар»
**СДАЕТ ПОМЕЩЕНИЯ ПОД ОФИС**
на **3, 6, 7** этажах
Дома печати.
Справки по тел.: 28-83-70, 56-04-17, 28-83-64.

## СУТАТĂП / ПРОДАЮ

**2. АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ, пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 31 руб., 12х20х40 – 26 руб., 9х20х40 – 22 руб. Высокое качество. **Песок,** ОПГС. Доставка манипулятором. Без вых. **Т. 8-967-470-46-77.**

**3. АКЦИЯ! КОЛЬЦА** ж/б для колодцев и к-заций 0,7; 1; 1,5 м. **Бурение.** Д-ка манипул-м. Работаем без выходных. **Т. 8-967-470-46-77.**

**4. Немецкие пластиковые ОКНА.** Скидки. Гарантия. Замер, д-ка – бесплатно. **Т. 8-987-576-65-62.**

**6. Косилки,** грабли, пресс-подборщики, **погрузчики,** отвалы. **ОПТОВЫЕ ЦЕНЫ!** Т. 8-927-851-68-58.

**7. Гравмассу, песок, щебень,** керамзит, торф, кирп. бой, чернозем, навоз. Дешево. **Доставка.** Т.: 89033581770, 89276689713.

**8. Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирп. бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9. ГРАВМАССУ, песок,** щебень, **керамзит,** кирп. бой, чернозем. **Дешево.** Доставка. Т. 89033583021.

**11. Срубы на заказ.** Т. 37-28-74.

**13. Гравмассу, песок, керамзит,** бой кирпича. Д-ка. Т. 89033225766.

**14. Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-927-855-83-55.**

**16. Гравмассу, песок, щебень, керамзит** – недорого. Т. 89053465671.

**17. ОПГС, песок,** бой кирпича, **керамзит, навоз.** Т. 89051974019.

**21. Керамблок, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 89176757528.

**24. Грабли,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники,** опрыскиватели, **погрузчики,** БДФ. Низкие цены. Д-ка. Т. 89278533596.

**27. КИРПИЧ** от 10 руб., **БЛОКИ к/б, пеноблоки.** Манипулятор. Тел. 89033220208, 48-02-08.

**29. Электропастухи, доильные аппараты.** Т. 8-937-375-80-95.

**33. Опрыскиватели,** плуги, фрезы, окучники, дискаторы, **картофелекопалки. ЦЕНЫ СНИЖЕНЫ!** Т. 8-937-388-50-89.

**35.** Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ.** Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. Т. 8-937-391-39-91.

**58.** Сетку-рабицу, заборы, **ворота** (кованые, распашные, гаражные), ДВЕРИ железные, **ОКНА** пластиковые. Кровля и обшивка домов. Козырьки, навесы. Строительные работы. Д-ка. Установка. Гарантия. **Льготникам скидки.** Т.: 89022881447, 387574. Сайт: metalservis21.ru

**93. Кирпич** красный одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный (все цвета), **половняк, КББ** 20х20х40, 20х12х40, **гравмассу,** керамзит. Доставка. Разгрузка кран-манипулятором. Т.: 44-20-97, 89033582097.



**95. ТРУБЫ ВИТЫЕ,** офактуренные; **кованые элементы** в ассортименте. Т. 89278441501.

**98. Бетон,** раствор, фунд. **блоки, плиты** перекрытия, перемычки, **крышки** для погреба, доски. Д-ка. Дешево. Т. 89278535732.

**142. ОКНА** – дешево. Т. 89276684382.

**154. Металлочерепицу,** профнастил, металлосайдинг, водостоки. Доставка. Замер. **Строительство.** Т. 8-919-653-43-68.

**185. Гравмассу, песок, щебень.** Доставка. Скидки. Т. 8-927-846-24-10.

**219. Гравмассу, песок, щебень -** 20 тн. Доставка. Т. 8-917-650-03-85.

**318. Канашскую гравмассу,** песок, **щебень,** навоз. Т. 89093020958.

**536. ОПГС,** песок, щебень, **бой кирпича,** асфальтную **крошку,** чернозем, торф. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 89613472547.

**594. ТЕПЛИЦЫ** 3х6 – 14000 руб., 3х8 – 18000 руб. Т. 8-917-666-80-20.

**595. ТЕПЛИЦЫ** от производителя по низким ценам. Т. 48-16-54.

**610. Отруби** – 7,5 р., **пшеницу** – 9 р., **ячмень** – 8,5 р. Т. 89373916016.

## ТУЯНАТĂП / КУПЛЮ

**28. Ĕне, вăкăр, тына, сурăх,** сысна амисем. Т. 8-927-999-37-37.

**50. Коров, телок.** Т. 8-927-850-85-64.

**574. Коров, бычков, телок, лошадей.** Т. 8-961-348-91-88.

**575. Коров, бычков, телок, лошадей.** Т. 8-967-796-71-42.

**614. СКОТИНУ.** Т. 8-961-344-03-82.

## ПУЛĂШУ / УСЛУГИ

**32. Лечение алкоголизма.** Анонимно. Консультация бесплатная с 9.00 до 19 ч., сб., воскр. с 9.00 до 13 ч. А: Чеб., пр. Ленина, 56. **Т. 8(8352)552733.** *Лиц. ЛО 21-01-001 341 от 17.11.2015г. МЗ ЧР. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**38. Чистка колодцев, скважин,** достанем предметы. Т. 89674715070.

**43. Бурение скважин** «под ключ». Гарантия. **Т. 8-927-668-43-82.**

**53. Изготовление ЛЕСТНИЦ** (дуб, хвоя, береза). **Т. 8-917-662-34-94.**

**77. НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ** за 1 день. Т. 8-937-397-24-42.

**152. Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.

**187. Бурение скважин.** Опыт. Гарантия. Паспорт. Т. 8-906-131-21-24.

**228. Строительные работы** от фундамента до кровли – бани, фасады, заборы. Т. 89373762324.

**238. Бурение скважин на воду.** Быстро. Качественно. Гарантия. Т.: 8-960-301-25-13, 8-927-991-66-99.

**527. Утепление домов ПЕНОИЗОЛОМ.** Т. 8-961-340-83-72.

**626. Услуги мини-трактора.** Ковш 30; 40; 60 см. Т. 89278625531.



**«ХРЕСЧЕН САССИ»**
**Обществăлла политика хаçачĕ**
**Индекс 54838**
Учредительсем – Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăйтытăмлă учрежденийĕ

**ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР – М.М. АРЛАНОВ**

**Редактор – В.В. ПЕТРОВА**
**РЕДКОЛЛЕГИ:**
В.В. Петрова – редактор
И.П. Никитина – корреспондент
Л.А. Никитина – корреспондент
Е.А. Трофимова – хаçат операторĕ

hypar3@mail.ru

Редакципе издатель адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем:
директор-тĕп редактор – 56-00-67,
пайсем – 62-50-06, 62-04-54,
реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70.
Факс (8352) 62-50-06

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 № регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» АО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла.
17 сехетре алă пуснă.
Заказ 3289
Тираж 6689


* Рекламăпа пĕлтерӳсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерӳсемшĕн вĕсене паракансем яваплă.

